Математикăпа халăхсем хушшинче ирттерекен „КЕНГУРУ” тата вырăс чĕлхипе „Вырăс упа çури – чĕлхе пĕлни пурне те кирлĕ”  Раççейри шкул ачисем хушшинче чăннипех те юратакан, паллă, сумлă вăйă конкурссем пулса тăчĕç.

«Хĕрарăмсем наукăра тата вĕрентӳре»  Регионсем хушшинчи обществăлла организацин Чăваш регион уйрăмĕ (ЧРО МОО ЖНО), И.Н.Ульянов ячĕллĕ университет тата Чăваш Республикин вĕренӳ тата çамрăксен политикин  министерстви чăваш чĕлхипе Пĕтĕм Раççейри «**Чĕвĕлти чĕкеç – чĕлхе пĕлни пурне те кирлĕ» вăйă конкурс** йĕркелерĕ.

Чĕлхе пĕлĕвĕ чылай шкул ачишĕн кичем те тунсăх йĕрке пек туйăнать. Конкурсăн тĕп тĕллевĕ – вĕренекенсен чылай йышне чăваш чĕлхипе интереслентересси, „кичем те йывăр” ăслăлăх умĕнхи йывăрлăхсене çĕнтерме вĕрентесси, ачасене чĕлхе ăслăлăхĕн илемне, чĕлхе техĕмне туйса илме хăнăхтарасси. Вăйă конкурс шкулсенче иртет, вĕренекене нимĕнле йывăрлăх та кӳмест, ыйтусемпе ĕçсем пĕтĕмĕшле кăсăклă, вĕсене „ăслă” ачасем çеç мар, чылай шкул ачи шĕкĕлчеме пултарать.

Сирĕн вĕренекенĕрсене эпир  **„Чĕвĕлти чĕкеç -2013”** вăйă конкурса хутшăнма йыхравлатпăр. Вăл 2013 çулхи нарăсăн 7-мĕшĕнче, кĕçнерни кун, иртет. Ку вăййа 2-11 классенче вĕренекенсем хутшăнма пултараççĕ (
**2-3, 4-5, 6-7, 8-9, 10-11**
классенчи вĕренекенсем уйрăмшарăн тупăшаççĕ).

Шкулсенче вăйă конкурс ирттерес тĕллевпе шкул директорĕсен комисси туни çинчен ятарлă хушу кăлармалла. Вăйă конкурс материалĕсене чикнĕ пакета комисси членĕсен вăйă пуçланас умĕн çеç ачасем умĕнче уçмалла, унччен уçма юрамасть! Вăйă вăхăтĕнче нимĕнле справочниксемпе, словарьсемпе, кĕнекесемпе тата ытти хушма материалсемпе уса курма юрамасть!

Вĕренекенсене чăваш чĕлхипе пурĕ 30 тĕрлĕ ыйтусемпе ĕçсем сĕнетпĕр, вĕсене кашни шкул ачиех пурнăçлама пултарать. Хуравĕсене çырмалла мар: сĕннĕ 5 хуравран тĕрĕссине (1 тĕрĕс хурава) суйласа илсе ятарлă бланк çинче хура гель ручкăпа паллă тумалла çеç. Ĕçе пурнăçлама **1 сехет те 15 минут** уйăрнă, çак вăхăт ывăнмалăх та çук. Конкурс пĕтĕмлетĕвĕсем кашни класпа уйрăммăн пулаççĕ. Ака уйăхĕнче, бланксене тĕрĕсленĕ хыççăн, кашни вăййа хутшăнакан шкул пĕтĕмлетĕвĕсемпе тата вĕренекенсен Раççей шайĕнче хăйсен ушкăнĕнчи вырăнĕсене палăртнин протокол ведомоçĕсене илеççĕ, вăййа хутшăнакан кашни вĕрентекен тивĕçлĕ сертификат илет.

Ыйтусемпе ĕçсене хатĕрлекенсем вăййа хутшăнакана кăсăклантарма вăйă хыççăн та вĕренӳ кĕнекисене, словарьсемпе справочниксене тата энциклопедисене уçса пăхтарас тĕллевпе тунă. Акă хăш-пĕр тĕслĕхсем (тĕрĕс хуравсене чалăш шрифтпа паллă тунă):

*       Айăпа кĕрсен мĕнле мунча кĕртеççĕ?

(А) тутлă; (Б) хаяр; (В) йĕпе; *(Г)* тип; (Д) ăшă.

*       ***Мăран*** сăмахăн антонимне тупăр.

(А) хитре; (Б) вăйлă; *(В)* çивĕч; (Г) ăслă; (Д) хăравçă.

*       Çыру, çырă, çырла, çырăну, çырăнтар, çырулăх, çыруçă, çырма-çатра сăмахсем хушшинче ***çыр*** (писать) тымартан пулнисем миçе? *(А)* 3; (Б) 4; (В) 5; (Г) 6; (Д) 7.

*   ***Пайта*** сăмахăн синонимне палăртăр. (А) пыйтă; *(Б)* усă; (В) лаша; (Г) пил; (Д) уçланкă.

Вăййа хутшăнма кăмăл тăвакансен, регионти йӗркелӳ комитетне 9.00 пуçласа 16.00 сехетчен (ӗç вăхăтӗнче) çак телефонсемпе шăнкăравламалла: (8352) 45-03-01 (35-56), 37-32-27, федераллă номер 8-927-667-32-27 (е merlina@chuvsu.ru электрон адреспа вăййа хутшăнакансен шутне (кашни класпа уйрăммăн), шкулăн адресӗпе телефонне, шкул директорӗн тата вăйăшăн яваплин хушамачӗпе, ятне тата ашшӗ ятне кăтартмалла. Çавăн пекех ку хыпара çак адреспа ярса памалла: 428015, Шупашкар хули, Университет урамӗ, 38 çурт, физикăпа математика факультечӗ, математикăна вӗрентес меслет кафедри (I-327 ауд.) (ку заявкăна вăййăн ыйтăвӗсемпе ӗçӗсене илме пынă чухне те парса хăварма юрать). Çавăн пекех заявкăсене
http://www.schoolgames.ru/
сайтра та пама пулать.

«Вăйă ирттермелли материалсене (ыйтусемпе ӗçсен варианчӗсене, хурав бланкӗсене, ятарлă инструкцие) шкулсене вăйă пуçланиччен 2-3 кун малтан регионăн Тӗп комитетӗнче çак адреспа паратпăр: 428015, Шупашкар хули, Университет урамӗ, 38 çурт, физикăпа математика факультечӗ, МПМ кафедри (I-327 ауд.).

Вăйă ирттернӗ хыççăн пӗтӗмлетӳсене 2013 çулхи çу уйăхӗн 20-мӗшӗччен çак адреспа пырса илмелле: 428015, Шупашкар хули, Университет урамӗ, 38 çурт, физикăпа математика факультечӗ, МПМ кафедри (I-327 ауд.). Вăйă пӗтӗмлетӗвӗсем йӗркелӳ комитетӗнче 1 çул упранаççӗ.

2012 çулхи вăйă конкурс пӗтӗмлетӗвӗпе (ыйтусемпе ӗçсен хуравӗсемпе ăнлантарăвӗ, çӗнтерӳçӗсен списокӗ тата вӗрентекенсен сӗнӗвӗсем) кӗнеке тухнă.

**«Чĕвĕлти чĕкеç»**

**Тĕп йĕркелӳ комитечĕ**